Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 август 23 ытларикун 194 (5007) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—87, ред. заместителĕн—3—87, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—5—55, ялхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—58, промышленнăç пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Финанс ĕçне татăклăнах вăйлатар

Социалисăмла аслă çĕршывăн пĕтĕм халăхĕпе пĕрле пирĕн Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем те çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пыраççĕ. Пысăк хăвăртлăхсемпе ӳссе пырать пирĕн социалисăмлă индустри. Чăваш республикинчи колхозсем вăйлă тырпулшăн большевикла кĕрешеççĕ, 1938 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ.

Чăваш республикĕнче кăçал çĕнĕ предприйатисем, çĕнĕ шкулсем, пульницăсем, ача йаслисем, клубсем т. ыт. те ĕçе кĕреççĕ. Çаксене тума Чăваш республикĕн бюджетĕнчен мĕлйуншар тенкĕ укçа кайать.

Халăх тăшманĕсен, фашиссене сутăннă троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандитсен тĕп йăвисене çапса салатса, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерсе пырса, пирĕн çĕршыв тата вăйлăрах, тата хăватлăрах пулса тăчĕ.

Анчах пирĕн социалисăмлă строительствăра хăшпĕр участкăсем кайа йулса пыни те пур-ха. Вĕсем социалисăм строительствине ăнăçлăн туса пыма чăрмантараççĕ. Çавăн пек участкăсенчен пĕри вăл финанс ĕçĕ. Пирĕн республикăра 1937 çултанпа социалисăмлă строительствă ĕçĕ уйăхран уйăха, кварталтан квартала мĕлйуншар тенкĕ укçа илсе çитереймесĕр пырать. Ку вăл финанс органĕсен, чи малтан Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн айăпĕпе пулса пырать.

1937 çулхи финанс планне мĕн пурĕ те 79,1 процент çеç тултарнă. Çав майпа республикă 10 мĕлйун тенкĕ укçа пухса çитереймен.

1937 çулти нойабĕр уйăхĕнче ПСК(б)П Обкомĕн IV-мĕш пленумĕ финанс ĕçĕ çинчен йатарласа сӳтсе-йавса, çак ĕç пирĕн республикăра кайа йулса пынине, финанс фронтĕнчи сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтересси вăраххăн пулса пынине палăртса хăварчĕ. Обком пленумĕ финанс ĕçне вăйлатасси партипе совет организацисен вирлĕ задачи пулса тăрать тесе палăртрĕ, финанс ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе конкретлă кăтартусем парса хăварчĕ.

Çапах та, парти Обком пленумĕ хыççăн, çак ĕç лайăхланни курăнмасть-ха, пачах урăхла, финанс ĕçĕ йапăхланса пыни палăрать. 1938 çулхи пĕррĕмĕш кварталти финанс планне 60 процент, иккĕмĕш квартăлта—72,2 проц., виççĕмĕш квартăл планне—августăн 20-мĕш тĕлне 26 процент çеç тултарнă.

Финанс планне тăтăшах тултарса пыманнин сăлтавĕ—Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн (Спасăв) тата Чăваш АССР Финанс халăх комиссариачĕн (Захарăв) кивĕ руководствисем Обком пленумĕ финанс ĕçĕ пирки йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пыманни пулать. Вĕсем финанс фронтĕнче сăтăрла ĕçĕн йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе кĕрешмен, пачах урăхла, вăл ĕçе йапăхтарса пынă.

Парти Обкомĕн йăнăшĕ—вăл çак банкрота тухнă çынсене пысăк шанăç пани пулать. Вĕсем çак шанăçа тивĕçлĕ пулман.

Виççĕмĕш квартăлри финанс планне тултарас ĕçре республикăна уйрăмăнах çак районсем кайала туртса пыраççĕ: Тăвай—11,8 процент, Патăрйел—16,9 проц., Йĕпреç—17,5 проц., Ишлей—18,3 проц., Сĕнтĕрвăрри—19,5 процент, Вăрмар—19,5 проц. çеç тултарнă. Ку районсемех ытти квартăлсенче те кайа йулса пынă.

Малта пыракансем те, Шăмăршă районĕ—50,7 процент, Канаш хули—39,9 проц., Йелчĕк районĕ—36,9 проц., Улатăр хули—35,8 проц., Шупашкар районĕ—33,3 процент çеç тултарнă. Çак цифрăсем вĕсем финанс планне тултарас тĕлĕшпе республикăра нихăш район та çителĕклĕ ĕçлеменнине кăтартаççĕ. Çакăн пек кайа йулса пынипе партипе правительствă малашне техех килĕшме пултараймаççĕ. Финанс ĕçне çак çывăх кунçенчех татăклăн вăйлатмала.

Пирĕн республикăра суту-илӳ организацисемпе Заготзерно базисем çăкăр сутăвне сарас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлеменнинĕ пула, финанс планĕ государства тупăшĕ йенĕпе уйрăмăнах йапăх тулса пырать. Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн тата Чăвашсойузăн çăнăхпа тата çăкăрпа сутă тăвас ĕçе большевикла йĕркелеме вĕренсе çитме тахçанах вăхăт ĕнтĕ.

1938 çулти ялхуçалăх налогне пухас ĕç те çителĕксĕр пулса пырать. Чылай районсенче йединоличниксем çине налог тĕрĕс шутласа хурас ĕçе пурнăça кĕртсе пымасçĕ, çĕрĕçĕсĕр пуçне илекен тупăшсене, уйрăманах суту-илӳ туса илекен тупăшсене шута илмесĕр хăвараççĕ. Йединоличниксене çакăн пек çăмăллăхсем пани пуринчен ытла Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле тата ытти районсенче те палăрать. Финанс Халăх Комиссариачĕн, райфинпайсен çак йăнăшсене халех тӳрлетмеле, йединоличниксенчен налог укçине пĕтĕмпех шыраса илес пирки парти Тĕпкомĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăça тĕрĕс кĕртсе пымала. Пайанхи куна йединоличниксем хушшинче парăм 4 мĕлйун тенкĕрен ытла иртет. Çакăн пек государствă ĕçне хирĕç пыракан йĕркене халех пăрахăçа кăлармала, йалта укçа-тенкĕ тӳлес ĕçри дисциплинăна çирĕплетмеле, йединоличниксене хăйсен парăмĕсене вăхăтра парса татма кирли çинчен тимлĕн ăнлантарса памала.

Сталинла Конституци совет çыннисене пысăк правасем пани тата совет çынĕсем çине пысăк обйазаннăçсем хуни çинчен парти организацисен халăха лайăх ăнлантарса парас пулать. Налог укçине тата государствă умĕнчи ытти парăмсене вăхăтра тӳлесе тăрасси—совет гражданĕсен пысăк та хисеплĕ обйазаннăçĕсенчен пĕри. Государствă умĕнчи парăмсене вăхăтра парса тăрасси—пирĕн çĕршыври кашни гражданинăн чыслă ĕçĕ пулать.

Финанс Халăх Комиссарнатĕнчи, райфинпайсенчи, перекет кассисенчи, госстрах тата государствă банкĕсенчи финанс работникĕсен финанс планне квартăлтан квартăла, уйăхран уйăха тата кашни вунă кунранах тултарса пыма кирлине йаланлăхах ăнланса илес пулать. Финанс фронтĕнчи сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтермеле, ĕçри йĕркесĕрлĕхе, государствă дисциплинине пăснине татăклăнах пĕтерсе, финанс аппаратĕнче çирĕп дисциплинă туса хумала. Финанс Халăх Комиссариачĕн финанс ĕçĕн пахалăхне ӳстермеле, вырăнти финанс органĕсемпе, йалсенче совет налог политикине пурнăçа кĕртсе пыракансемпе — финанс агĕнчĕсемпе оперативлă ĕçлесе пымала. Финанс органĕсен хăйсен ĕçне, социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарни урлă, финударниксене, отличниксене анлă çул парса, вăйлатса пымала. Мордва республикĕпе ăмăртса большевикла ĕçлесе, финанс планне квартăлтан квартăла, уйăхран уйăха тултарса пырар!

Парти райкомĕсен, райĕçтăвкомсен финанс планне тултарас ĕçе хăйсен аллине илмеле, финанс органĕсене кулленех пулăшса пымала, виççĕмĕш квартăлри финанс планне ăнăçлăн тултарас тĕлĕшпе çак кунсенчех татăклă ĕçсем тума палăртса, вăл ĕççене большевикла пурнăçламала. Райĕçтăвкомсем йалсоветсен çумĕнчи финанс çекцисен, комсодсен ĕçне чĕртсе йамала.

Пирĕн республикĕн, районсен тата хуласен бюджетĕнче приходпа расход йенĕпе палăртнă цифрăсем—социалисăмлă государствăн пурнăçа кĕртсе пымалли çирĕп саккунĕсем пулса тăнине, вăл саккунсене пурнăça кĕртессишĕн партипе правительствă умĕнче ответлă пулса тăнине финанс органĕсемпе совет организацийĕсен тивĕçлипех ăнланса илме вăхăт ĕнтĕ.

Ырăш акса пĕтерчĕ

Тутаркас. Тойнатĕ йалсоветне кĕрекен „Çĕнĕ пурнăç" колхоз августăн 18-мĕшĕнче ырăш акма тухса, икĕ кун хушшинче акса пĕтерчĕ. Кăçал кĕрхи тырăсене анăли уйсене лайăх сухаласа, ниçăмсти пăр'а çемçетнĕ. Суртăн вăрлăхсене вутпуççирен чӳхесе акнă.

Ырăш акас çĕрте М. Алексейĕва, Е. Илйина колхозниксем стахановла ĕçлерĕç. Иерыхăвна И. Марийа колхозниксем çеялкăпа акмалли нормăна 300-шер процент тултарса пычĕç. К. Донской.

ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çĕççийĕ

Августăн 21-мĕшĕнчи ларусен дневникĕ

Сойуз Советĕнче

Августăн 21-мĕшĕнче Сойуз Совечĕн 8-мĕш ларăвĕ пулнă, унта „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" калакан саккун пройектне сӳтсе-йавнă.

Ложăсем çинче—партипе правительствă руководителĕсем, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем.

Прениссенче Мельникăв, Саберăв, Тронин, А. С. Йежов, Лелина, Ф. И. Скилков, Ф. И. Польяков, Немченко, Саловă, Фомин депутатсем тухса калаçнă.

Тухса калаçакансем пурте, колхоз хуçалăхĕ татти сыппиcĕр ӳссе пынине паллă туса, колхозри пурнăç кунсеренех пуйанланса та культурăланса пыни çинчен калаççĕ. Колхозсем государствă умĕнчи обйазательствăсене вăхăтра тултарса пыраççĕ, анчах хальхи вăхăтра нумай йединоличниксен хуçалăхĕсем çинчен ун пек калама çук-ха, тесе паллă тăваççĕ депутатсем.

— Колхозри хресченсен анлă ран та анлă массисем,—тет депутат Мельникăв,—хăйсен пуйан пурнăçĕ, культурăлă та телейлĕ пурнăçĕ, аслă Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн халăх хуçалăхĕ тата оборонă хăвачĕ ӳссе çирĕпленнипе уйрăлми çыхăнса тăнине ăнланаççĕ. Колхозник-хресченсем государствă задачисем пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланаççĕ, çавăнпа та хăйсен государствă умĕнчи пĕтĕм обйазательствисене тултарасси—пуринчен те малтан тумалли ĕç тесе шутлаççĕ.

— „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" калакан саккун пройекчĕ, Верховнăй Совет Çĕççинче сӳтсе-йавма тăратнăскер, колхозниксен кăмăлĕсемпе килĕшсе тăрать,—тет Мельникăв йулташ.—Саккун йединоличниксен хуçалăхĕсем спекульантла усламсем илсе пурăнассине пĕтерсе лартать, социалисăмлă çĕрĕçне тата ытларах çирĕплетме пулăшать.

Саловă йулташ çакна пĕлтерет: Курск облаçĕнче йединоличник çектăрĕ акакан çĕр лаптăкĕ кашни çулах пĕчĕкленсе пырать, йединоличниксен хуçалăхĕсенчи лашасен шучĕ ӳссе пырать. Йединоличниксем лашасемпе пуринчен ытла йалхуçалăх производствинче мар, урăх çĕрте, спекульантла услам илес шутпа усă кураççĕ.

Депутат Фомин хăй сăмахĕнче вырăнсенчи хăшпĕр совет органĕсемпе финанс органĕсем либералла ĕçленине сивлет, вĕсем йединоличниксем государствă умĕнче хăйсен обйазательствисене тултарса пыманнипе килĕшсе тăраççĕ.

Тухса калаçакансем пурте, „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" калакан саккун пройектне пĕтĕмĕшпех ырласа, çапла калаççĕ: вăл саккун колхозниксен кăмăлĕсене пурнăça кĕртет тата йалта колхоз стройне татах çирĕплетме пулăшать.

Докладчик—депутат Угарăв йулашки сăмах каланă хыççăн, „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хумалли саккуна" Сойуз Совечĕ пĕрсаслăн çирĕплетет.

1938 çулта уçма хатĕр мар. Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине организацилесси пысăк та ответлă ĕç. Выставка иртерме большевикла хатĕрленес пулать, хамăр çĕршыври йалхуçалăхне, йалта колхоз стройĕ çĕнтернине вăл тĕрĕс кăтартса патăр. Епĕр, Украинăри депутатсен ушкăнĕ, Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине 1939 çулхи августăн 1-мĕшĕнче уçмала тума сĕнӳ тăрататпăр.

Прениссенче тухса калаçнă депутатсем Берийа, Маркин, Коротков (Чăваш АССР), Йуркин, Конуспайĕв депутатсем Хрушчов сĕнĕвĕшĕн тăраççĕ, выставка хатĕрленес ĕçри конкретлă çитменлĕхсене кăтартса хăвараççĕ.

Кеске перерыв пулнă хыççăн лару ĕçĕсем çĕнĕрен пуçланаççĕ.

Ложăсем çине Сталин, Молотăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Микойан, Жданăв, Йежов, Хрушчов, Маленков, Шкирйатăв йулташсем пыраççĕ, вĕсене саламласа нумайччен чарăнмасăр тăвăллăн алă çупаççĕ, алă çупни овацине куçать. Пурте ура çине тăраççĕ. Сталин йулташа чысласа: „Сталин йулташа „урра!", „Аслă Сталина—„урра!"—тесе кашкăрнисем илтĕнеççĕ.

ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Бенедиктăв йулташ, депутат Цицин тухса калаçнă хыççăн тата депутат Хрушчов йулашки сăмах каланă хыççăн, Палатăсем тăрăх уйрăмăн сасăласа, ССРС Верховнăй Совечĕ „Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставки çинчен" калакан саккуна пĕрсаслăн çирĕплетет.

Унтан Верховнăй Совет кун йĕркинчи 8-мĕш ыйту çине—ССРС Верховнăй Совечĕн Президиумĕ ССРС Верховнăй Совечĕн Пĕррĕмĕшпе Иккĕмĕш Çĕççийĕсем хушшинчи вăхăтра кăларнă, ССРС Верховнăй Совечĕ çирĕплетмели Указсем çинчен тăракан ыйту çине куçать. Ку ыйтупа ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн çекретарĕ депутат Горкин доклад тăвать.

Горкин йулташ çакна пĕлтерет: Пĕррĕмĕшпе Иккĕмĕш Çĕççисем хушшинчи вăхăтра ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ хаљ ССРС Верховнăй Совечĕ çирĕплетмели çакнашкал Указсем кăларнă:

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 20 çул тултарнине паллă тăвас шутпа амнисти парасси çинчен;

ССРС Халăх Комиссарĕсене—Бакулина, Пахомăва, Попова, Брускина, Гилинскине ĕçрен хăтарасси çинчен;

Л. М. Каганович йулташа Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтармасăр Çулйĕр Халăх Комиссарне лартасси çинчен, Н. И. Йежов йулташа—Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтармасăр Шыв транспăрчĕн Халăх Комиссарне лартасси çинчен, С. Е. Скрынникăв йулташа—Заготовкăсен Халăх Комиссарне, В. К. Љвова—Машиностройени Халăх Комиссарне, И. Г. Кабанов йулташа—Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссарне лартасси çинчен;

Л. М. Каганович йулташа Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕнчех тата Çулйĕр Халăх Комиссарĕнчех хăварса ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителне лартасси çинчен;

РСФСР составĕнче Мурманск облаçĕ тата Украинă ССР составĕнче—Сталинск тата Ворошиловград облаçĕсем тăвасси çинчен.

Горкин йулташ докладне пĕтнĕ хыççăн, ССРС Верховнăй Совечĕ ССРС Верховнăй Совечĕн Президиумĕ кăларнă указсене сасăлама тытăнать тата вĕсене пĕрсаслăн çирĕплетет.

Палатăсем тăрăх уйрăмăн сасăласа, ССРС Верховнăй Совечĕ ССРС Верховнăй Совечĕн Президиумĕн решенийĕсене майă ССР Сойузĕн Конституцин (Тĕп Саккунĕн) 22-мĕшпе 23-мĕш статйисене улăштарасси тата хушусем кĕртесси çинчен пĕр кăмăллăн постановлени йышăнать.

Ларăва председатель пулса йертсе пыраканĕ—Национальнăçсен Совечĕн Председателĕ депутат Шверник, Иккĕмĕш Çĕççин кун йĕрки пĕтнĕ тата ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çĕççийĕ хупăнна, тесе пĕлтерет.

Сойуз Совечĕпе Национальнăçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче

Августăн 21-мĕшĕнче каçхине Сойуз Совечĕпе Национальнăçсен Совечĕн пĕрлехи пиллĕкмĕш, йулашки ларăвĕ пулнă.

Ложăсем çинче—партипе правительствă руководителĕсем, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем.

Кун йĕркинчи ыйту—Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставки çинчен, ăна Украинă СС Республикĕнчи депутатсен ушкăнĕ тăратнă. Ку ыйтупа депутат Хрушчов доклад тăвать.

— Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине хатĕрленес ĕç мĕнле пынипе паллашни,—тет Хрушчов йулташ,—çакна кăтартса пачĕ: вăл

(ТАСС).

Августăн 20-мĕшĕнче Национальнăçсен Совечĕн ларăвĕнче депутат Г. И. ИВАНОВ каланă сăмах

Депутат йулташсем! Саккунсем хатĕрлекен Комиççи Верховнăй Совет Çĕççинче пăхса тухма тăратнă „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" калакан саккун пройекчĕпе епĕ пĕтĕмĕшпех килĕшетĕп тата ăна çирĕплетме сĕнетĕп.

Çак пройект ССРС Конституцин 130-мĕш статйипе пĕтĕмĕшпех килĕшӳлĕ.

Пирĕн çĕршыври йалхуçалăхĕ—колхозлă йалхуçалăх. Колхозсем хăйсем ĕçлеме пуçланăранпа йалхуçалăхĕн сăн-питне тĕпренех улăштарчĕç.

Йединоличникле хресчен хуçалăхĕ йалхуçалăхĕн тухăçлăхне ӳстерме чăрмантарса пынă. Вăл йалхуçалăхне механизацилеме тата хуçалăха аслăлăх кăтартнă пек туса пыма май паман.

Йединоличникле хресчен хуçалăхĕ пирĕн çĕршыври йалхуçалăхне организациленĕ çĕрте тĕп никĕс, тĕп формă пулса тăнă чухне, хресченсем ĕлĕкхи, ыханлă патша стройĕнчен, буржуалă-помещикле стройран йулнă нушапа тĕттĕмлĕхе пĕтерме пултараймăн. Коммунисăмăн учителĕсем—Маркс, Енгĕлс, Ленин тата Сталин Октйабĕрти Аслă Социалисăмлă революциччен чылай малтан çапла кăтартса панă: нумай йышлă хресченсемшĕн социалисăм патне каймалли пĕртен-пĕр çул вăл—пĕрлешӳ, социалисăмлă шултăра хуçалăх туни пулать, çакна рабочисемпе хресченсем влаçа çĕнсе илнĕ хыççăн пурнăça кĕртме май пур, тенĕ.

Пирĕн çĕршыври нумай мĕлйунлă хресченсем, колхоз стройĕ усăллине тата вăл пĕртен-пĕр тĕрĕс строй пулнине вуншар тата çĕршер примĕрсемпе тĕрĕслесе пăхса, аслă вырăс рабочи класĕ активлăн пулăшнипе, пирĕн Ленинăн—Сталинăн большевикла партийĕ тӳрремĕнех йертсе пынипе, кĕске срукрах йалхуçалăхĕн социалисăмлă форми çине куçрĕç.

Мĕлйуншар йединоличникле хресчен хуçалăхĕсем колхозсене пĕрлешнĕ. Халĕ ĕнтĕ йалхуçалăхĕнче колхоз стройĕ пуç пулса тăрать, епĕр çирĕппĕн те ниçта пăрăнмасăр коммунисăм патне пыратпăр.

Епĕ—Чăваш Автономлă Республикĕнчен суйланă депутат, çавăнпа та мана хамăр республикăри колхозсен çитĕнĕвĕсем çинчен калакан хăшпĕр сведĕнисемпе усă курма ирĕк парăр.

Ĕлĕкхи вăхăтра, истори пĕлтернĕ тăрăх, бойарсемпе помещиксем чăвашсене лайăх çĕрсенчен чи начар тата йурăхсăр вырăнсене хăваласа йанă. Чăваш республикĕн территорийĕнче хура тăпра çукпа пĕрех; пĕтĕм Чăваш республикĕн çĕрĕ çырма-çатрасемпе витĕнсе выртать. Ĕлĕкхи Российăн халама çук анлă талкăшĕсенче чăвашсем валльи вырăн тупăнман. Чăвашсене тыр пулман çĕр çине куçарса лартнă.

Чăваш халăхĕ йĕрипенех вăлсе пĕтес хăрушлăх умĕнче тăнă. Совет влаçĕпе пирĕн большевикла парти çеç çак халăха чĕртсе тăратрĕç. Чăвашсем ССР Сойузĕнчи халăхсен тăванлă çемйинче ирĕклĕхпе пĕртан права илчĕç; çĕр, çĕрĕç хатĕрĕсем, лайăх суртлă вăрлăхсем, комбайнсем, трактăрсем, автомашинăсем, минераллă имçамсем, аслăлăх, агрономсем, йалхуçалăх кивçенĕсем, 25 пин рабочи шучĕпе тата политпайсен шучĕпе йалхуçалăхĕнчи большевикла организатăрсене илчĕç. Чăваш халăхĕ йалхуçалăхне татăклăнах çĕнетсе улăштарчĕ.

Халĕ ĕнтĕ Чăваш республикĕн йалхуçалăхĕнче колхозсем пĕр пĕччĕнех пуç пулса тăраççĕ. Вĕсем республикăри мĕн пур акмалли çĕр лаптăкĕнчен 91 процентне акаççĕ. Колхозсем йалăн тата пĕтĕм республикăн сăн-питне тĕпренех улăштарчĕç. Уйрăм хуçалăх условийĕсенче мужик тарне нумай йухтарнă çĕрсем, сухапуçпе сухаланă пирĕн çĕрсем гектартан 42—50 пăт тырă панă. Колхозсем ĕçлеме пуçланăранпа чăваш çĕрĕсем çинче тырпул тухăçлăхĕ икĕ хут ӳсрĕ.

Сталин йулташ çулталăкра 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илесси çинчен панă кăтартăва пурнăça кĕртессишĕн кĕрешсе, ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ колхозсене организацине хуçалăх йенчен тĕреклетесси çинчен тата хура тăпралă мар облаçĕсемпе крайсенче тата республикăсенче йалхуçалăхне вăйлатасси çинчен йышăннă постановленисене пурнăça кĕртессишĕн кĕрешсе, Чăваш республикĕнчи колхозсем 1937 çулта гектартан вăтам шутпа 97-шер пăт тĕштырă туса илчĕç. Мĕн пур колхозсенче тата йалхуçалăхĕн мĕн пур участкисенче те йалхуçалăх тухăçлăхне вăйлăн ӳстернĕ.

Пирĕн республикăри кашни колхозăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен тăварлă фермă пур. Государствă пулăшса пынипе колхозсем выльăх-чĕрлĕх кĕтӳне лайăхлатаççĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен колхозсем нумай, вĕсенче пĕр ĕне 1500—2000—2500 литр сĕт парать.

1933 çулта çураки ĕçĕсене 30 кунта туса пĕтернĕ пулсан, 1937 çулта ака пĕтĕмпе те 13 кунта çеç пынă, 1938 çулта—8 кунтах акса пĕтернĕ. Тырпулсене пухса кĕртес срукесем те çавăн пекех пысăккăн чакаççĕ.

Çаксем пурте вĕсем йалхуçалăхне пысăккăн механизацилени тата социалисăмлă шултăра хуçалăхсенче — колхозсенче ĕçе тĕрĕс организациленин резульачĕ пулса тăраççĕ.

Йалхуçалăхĕ пĕтĕмĕшпе хăватлăн çĕкленнĕ хушăра ĕçре чăн-чăн стахановла тĕслĕхсем кăтартакан колхозсемпе колхозниксем уйрăмах палăрса тăраççĕ. Сăмахран, Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоза пурте пĕлеççĕ, унта орденоносец Сергей Коротков, ССРС Верховнăй Совет депутачĕ, халь Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарне лартнăскер, 9 çул хушши колхоз председателĕ пулса ĕçлерĕ. Çав колхоз 1936 çулта, вăл çул Чăваш республикĕнче уйăр çанталăк пулнă пулсан та, гектартан 100 пăт тĕштырă туса илчĕ, 1937 çулта, республикăри мĕн пур колхозсем гектартан вăтам шутпа 97 пăт илнĕ хушăра, вăл колхоз 180 пăт туса илчĕ.

Пирĕн гектартан 125 пăт тырă туса илнĕ районсем пур, сăмахран, Патăрйел районĕ. Орденоносец, РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Острйаков йулташ председатель пулса йертсе пыракан „Хĕрлĕ Туçа" колхоз гектартан 160 пăт тырă илнĕ. Патăрйел районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз бригадирĕ Петухов гектартан 426 пăт сĕлĕ туса илсе, тырпулшăн мĕнле кĕрешмели çинчен лайăх тĕслĕх кăтартса пачĕ. Кирăв йачĕпе тăракан колхоз бригадирĕ Степанăв гектартан 287

([illegible] страницăра).

Августăн 20-мĕшĕнче Националĭнăçсен Совечĕн ларăвĕнче депутат Г. И. ИВАНОВ каланă сăмах

(ЙУЛАШКИ)

пăт тулă туса илнĕ, кунта колхозсем тăвăччен тулăна пĕртте акман пулнă.

Колхозсен пысăккăн ӳснĕ доходĕсем те колхоз стройĕн çитĕнĕвĕсене кăтартса параççĕ. Пĕр пин пăт тырă тата пиншер тенкĕ укçа ĕçлесе илекен колхозниксем халĕ ĕнтĕ сахал мар. Сăмахран, Левин йăчĕпе тăракан колхозри колхозник Панфилăв комсомолец 1100 пăт тырă тата 2431 тенкĕ укçа ĕçлесе илнĕ.

Колхозсем клубсем, радиоузелсем, кинотеатрсем, електростанцисем т. ыт. турĕç, вĕсене халĕ те тăваççĕ. Вĕсем йăла илем кĕртес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттереççĕ. Йалти пурнăç татах та хавасларах, кульпурларах, пуйанрах пултăр тесе, колхозсем пысăк ĕçсем турĕç, малала та пысăк ĕçсем тăваççĕ. Халĭхи вăхăтра йал хулапа радио урлă, телеграф, телефон, почтă урлă, лайăх йусанă çулсемпе хăвăрт кайакан машинсем урлă, çавăн пекех тата сывлăш урлă самолĭотсемпе çыхăнса тăрать.

Социализм—текех ĕнтĕ ĕмĕт мар, вăл пирĕн чăн-чăн пурнăçра пур. Сталинла Конституци тăрăх, партин тĕп çулйĕрĕшĕн кĕрешни тăрăх, социализмлă промышлĕннăçа хăватлăн вăйлатнипе, колхозсене малала тĕреклетсе пынипе, пирĕн парти йĕртсе пынипе, аслă Сталин çул кăтартса пынипе—епĕр коммунизма çитетпĕр. Коммунизмлă обшчествăна туса çитеретпĕрех! (Тăвăллăн аллă çупаççĕ).

Епĕр калама çук пысăк çĕнтерӳсем турăмăр, мĕншĕн тесен социализмлă промышлĕннăç йалхуçалăхне социализмла организацилесе çĕклесе йарас тĕлĕшпе пит нумай ĕç турĕ, малала та тăвать. Рабочи клас пирĕн йалхуçалăхне чи лайăх машинăсемпе, транспартпа, çыхăну хатĕрĕсемпе т. ыт. хĕçпăшаллантарчĕ, малала та хĕçпăшаллантарать. Рабочи клас хăйĕн чи лайăх çыннисене йала йăчĕ, малала та йарать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ рабочи класпа хресчен хушшинчи туслăх, çыхăну тата пĕрпĕрне шанни çав тери пысăк.

Халăхăн нимĕнле тăшманĕсем те çав çыхăнупа туслăха ниxăçан та татма пултараймĕç.

Аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе ĕлĕк пусмăрта пурăннă мĕн пур халăхсем [illegible] чуралăхран хăтăлса тухрĕç.

Пирĕн вырăс халăхĕне совет çĕршывĕнчи мĕн пур халăхсен хушшинчи туслăх аслă та вăйлă!

Епĕр çак телейлĕ пурнăç патне пирĕн парти тата аслă Сталин йĕртсе пынипе, партин тата халăхăн мĕн пур тăшманĕсемпе татăклăн кĕрешсе пырса çитрĕмĕр.

Акă мĕншĕн пирĕн совет халăхĕ хамăрăн большевиксен ленинла-сталинла партине, пирĕн тăван аттепе учителе—Сталин йулташа (тăвăллăн аллă çупаççĕ) çав тери йуратаççĕ, фашисла шпионсен, диверсантсен тата сывĕлеренсен троцкисла-бухаринла, рыкăвла тата буржуала-националисла ирсĕр бандине çĕмĕрсе тăкнă пирĕн сталинла чекиса—Йежов йулташа çав тери йуратаççĕ.

Пирĕн çĕршыври колхозниксем хăйсен государствă умĕнчи тивĕçлĕхне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Анчах йединоличниксем çинчен çакăн пек калама пулмаст-ха.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕн апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленинче çапла каланă: „партипе советăн республикăсенчи, крайсенчи тата облăçсенчи органĕсем йединоличниксем тĕлĕшĕнчен политикăна тата правительствăпа парти постановленийĕсене пăсаççĕ. Совет саккунĕсем йединоличниксен хуçалăхĕсем валĭли налогсем тĕлĕшпе, тĕштыр тăратас тата аш-какай тăратас тĕлĕшпе государствă обйазательствисем çирĕплетсе панă. Çапла пулсан та, йединоличниксен хуçалăхĕсене саккунпа çирĕплетсе панă государствă обйазательствисене тултармала тăвас вырăнне, партипе советăн вырăнсенчи органĕсем йединоличниксене, тĕрĕссипе илсен, государствă обйазательствине тултарассинчен пăрăнса йулмали май туса хураççĕ. Чылай облăçсемпе крайсенче аш-какай тăратнă çĕре йединоличниксене пачах хутшăнтармаççĕ, аш-какай тăратмали район заданийĕсене тултарассине колхозсем çине хураççĕ. Çапла ĕнтĕ советпа парти органийĕсем йединоличниксен хуçалăхĕсене, чăннипе илсен, колхозсемпе танлаштарсан лайăхрах вырăна каларса тăратаççĕ. Ку вăл саккунсене тепренех хирĕç пыни пулать.

Йединоличниксен хуçалăхĕсенчи налог хуман лашасемпе, йединоличниксем, йалан пекех, хăйсен йалхуçалăх ĕçĕсене тунă çĕрте мар, спекуляци тумали тата пуймали хатĕр пек усă кураççĕ.

Колхоз правленийĕсем советпа партин районри органĕсем пĕлсе тăнă çĕртенех, йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсса, час-часах йединоличниксене колхозсенче ĕçлеме тара тытаççĕ, çак ĕçсемшĕн йединоличниксене колхозниксене ĕçкунĕсемшĕн тӳленинчен те ытларах тӳлеççĕ, çак вăл колхозсенче дисциплинăна аркатмасăр тăма пултараймаст.

Йединоличниксен хуçалăхĕсем çине çакăн пек тĕрĕс мар пăхни не пула, вăл йединоличниксен хуçалăхĕсене малашне колхозсене хутшăнтарас ĕçе тӳррĕнех сийен курет.

Çаксем пурте партин республикăсенчи, крайсенчи тата облăçсенчи органĕсем йенчен йединоличник тĕлĕшпе пысăк йăнăшсем туни çинчен кăтартса параççĕ".

Çакăнта калани тĕрĕссине çирĕплетсе паракан фактсене нумай илсе кăтартма пулĕччĕ.

Пĕтĕм Чăваш республикĕ 1938 çулта тырпул тăратас çулталăк планне августăн 15-мĕш тĕлне 38 процент тултарнă хушăра, йединоличниксем хăйсен планне 17 процент çеç тултарнă. Йединоличниксен хуçалăхĕсенчен 64 проценчĕ государствă умĕнчи аш-какай тăратмали хăйсен обйазательствисене тултарас çĕре хутшăнман тата 43 проценчĕ—сĕт-çу тăратас çĕре хутшăнман.

Уйрăм хуçалăхлă хресченсем вăрман турттарнă çĕре, çулйĕр ĕçне т. ыт. начар хутшăнаççĕ. Совет тăван çĕршывĕн мĕн пур ырлăхĕсемпе—шкулсемпе, вăл шутрах аслă шкулсемпе те, пульницăсемпе, клубсемпе, библиотекăсемпе, ытарайми паха çулсемпе, машинăсемпе, транспартпа, пирĕн пĕтĕм промышлĕннăç ĕçĕпе тата, йулашкинчен, йут çĕртен килсе тапăнассинчен Хĕрлĕ Çар сыхласа тăнипе, Совет Сойузĕнчи халăхсен калама çук пысăк çемйин ĕçĕпе туса хунă тата халĕ те туса пыракан мĕн пур ырлăхсемпе епĕр пурте пĕр çын йулмийех усă куратпăр. Çак правасене Сталинла Конституци гарантилерĕ.

Çавăпа та Совет Сойузĕнчи мĕн пур граждансем пĕр çын йулмийех государствă умĕнчи хăйсен тивĕçĕсене пурнăçа кĕртнĕ çĕре хутшăнса ĕçлемеле туни кирлĕ.

Епĕр, вырăнти работниксем, çакна ку тарăччĕнех шута илсе çитереймен пулнă.

Йединоличниксем, йалти халăхăн чи сахалтарах организациленнĕ пайĕ пулнă май,—халăхăн çав пайĕпе ытларах ĕçлеме кирлĕ.—ку тарăччĕнех айакра тăрса йулнă. Епĕр пĕлсе-и, йе пĕлмесĕр-и, йединоличниксене пăсса пынă, государствă обйазательствисене тата вырăнти повинноçсене тултармасăр йулма, тĕрĕссине илсен, çапла тунипе государствă дисциплинине пăсма вĕрентнĕ, йединоличнике хăйĕн лашипе хăйĕн хуçалăхĕнчи йалхуçалăх ĕçĕсене тунă çĕрте мар, спекуляци тума тата пуйма май туса панă.

Çакна тӳлетме кирлĕ. Саккун пройекчĕ йединоличниксен хуçалăхĕсене вĕсем хăйсен лашисемпе усă курнă май палăл обйазăннăççем çирĕплетсе парать.

ССРС Верховнăй Совечĕ çав саккуна пĕр кăмăллă пулса йышăнĕ тесе шутлатăп епĕ, саккун пройектне Саккунсем хатĕрлекен Комиссинчен пире депутат Угарăн йулташ каласа пачĕ ĕнтĕ. (Аллă çупаççĕ.)

Тырпула вут-кăвартан сыхлар

ВĂРНАР. Колхозсем нумайĕш тырă вырса пĕтерчĕç. Халĕ авăн çапас ĕçе хĕрсех тытăнчĕç. Çапса тасатнă çĕнĕ тырра типĕ кĕлетсене тирпейлĕн пуçтарса хурасси, тырпула лайăх сыхласа тăрасси халĕ колхозсенче пысăк ĕç пулса тăрать. Пуринчен ытла колхозри пурлăхсене вут-кăвартан сыхласа тăмалли çинчен манмала мар.

Вут-кăвар мĕн чул хăрушă инкексем кăтартма пултарни çинчен пурте пĕлеççĕ. Пĕр икĕ сехет хушшинчех çулсерен ĕçлесе тунă пурлăх пĕтме пултарать. Колхоз председателĕсемпе пушар дружини начальникĕсем умĕнче тăракан пысăк задачă уйран пухса кĕнĕ тырпула вут-кăвартан сыхласа тăрасси пулать.

Çакна шута илсе районри чылай колхозсем тырпула вут-кăвартан сыхлас ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартнă. Рунгăра итемсем çине шанчăклă хурал тăратнă. Каткасемпе шыв çителĕклĕ таран хатĕрлесе лартнă. Итем çинчех насус та пур. Кĕлетсем патне те çирĕп хурал тăратнă. Хуралта лайăх лашасем тăраççĕ. Çавăн пекех Кăкшăмра, Вăрманкассинче те пушарпа кĕрешес ĕçсене тивĕçлĕ вырăна лартнă.

Анчах хăшпĕр колхозсенче ку тарана çитсе те вут-кăвартан сыхлас ĕçе тивĕçлĕн хакламаннисем пур-ха. Айкăшри „Ирар" колхоз пурлăха вут-кăвартан сыхлас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Итемсем çинче тата колхоз ампарĕсем патĕнче çирĕп хурал тăратман, шыв çук.

Мăн Турхан колхоз председателĕ ирĕклĕ пушар дружини çийĕнчех туса хума кăтартнă ĕçсен халĕ те туман. Хурал тăма уксак лашасене çеç панă. Колхоз пурлăхĕсем патĕнче хурал тата шыв та çук.

Çавăн пекех Чăрăш Шĕнер, Уйкасси, Туваньхинă тата ытти колхозсенче те чăтма çук начар ĕçлесе пыраççĕ. Кунашкал çитменлĕхсене халех пĕтермеле.

Колхозсенче вут кăвартан сыхланасси колхоз председателĕсен, пушар дружинисен, бригадирсен, кашни активисăн, кашни колхозникăн тивĕçлĕ ĕçĕ.

Ст. Улангай.

„Хĕрлĕ шурăмпуç" хĕрӳлĕ ĕçре

Маслă йалĕнчи (Куславкка р.) „Хĕрлĕ шурăмпуç" колхоз уйри тырпулсене аван пуçтарса кĕчĕ. Кĕлтесене те турттарса капана хывса пĕтерне. Вăрлăхлăх клевĕре вăхăтра пуçтарса кĕнĕ. Çак ĕçсенче стахановецсем йышлăн палăрчĕç. Акă вĕсем: Н. Плотникăвă, Й. Родионăвă, Т. Куçмина, П. Степанăвă, М. Харитонăвă, И. Родионăвă. Вĕсем йаланах ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартса пычĕç.

Халь кашни бригадă авăн çапать. Çавнашкалах кĕрхи тырăсене акма тухнă. Ку ĕçе те пысăк пахалăхпа ирттереççĕ.

„Хĕрлĕ шурăмпуç" колхоз государствăна тата машинă-тракторла станцине ыраш парса татнă.

Колхозра тырпулсене пушартан тата ытти сийенлĕхрен сыхлассине лайăх йĕркеленĕ. Итемсем тата складсем патне çирĕп хурал тăратнă, пичкесемпе шыв лартнă, чĕлĕм туртма уйрăм вырăнсем уйăрнă.

И. Куçмин.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн

Оринина (Тутаркас р.) йалсоветĕнчи „Восток" колхозпа „Красное Сормово" колхоз пур ĕçсем йенчен те пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Тырпулсене уйран пуçтарса кĕрес, государствă умĕнчи обйазательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе „Восток" колхоз ăмăртура малти рете тухрĕ. Ку колхоз тырпулсене уйран ăнăçлăн пуçтарса кĕчĕ. Государствăна пур культурăсем тăрăх та тырă, аш-какай, сĕт çу, çăм парса татнă.

Уйри кĕлтесене турттарса, капана хывса çитерне. Авăн çапас ĕç хĕрӳлĕн пырать.

„Восток" колхозри бригадăсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тивĕçлипе пуçарса пыраççĕ. Халь вĕсем кĕрхи тырăсене акма тухрĕç. Бригадăсем суртлă вăрлăхсемпе вутпуççирен чӳхесе çейалкăсемпе акса хăвараççĕ Кĕрхи тырăсене акмалли участкăсене лайăх çемçетнĕ.

А. Калинин.

Ĕçри кăлтăксем

Йĕпреç. Телефонпа телеграф ĕçне лайăх йĕркелесе йарасси, хаçат-журналсемпе çырусене вăхăтра салатасси çыхăну пайĕн чи ответлă ĕçĕ пулса тăрать. Хаçат-журналсемпе çырусене вăхăтра салатса парас тата хаçат-журнал йышлă сарас ĕçре колхозсенчи пиçмоносецсем пысăк вырăн йышăнса тăмала.

Анчах та пирĕн колхозсенчи пиçмоносецсем начар ĕçлени палăрать. Ку ĕçе лайăх йĕркелесе йарассипе çыхăну пайĕн начальникĕ Йакăвлĕв йулташ та çителексĕр ĕçлет. Вăл колхозсем хĕрӳ ĕçе тытăниччен пиçмоносецсене пухса канашлу туса ирттермен. Пиçмоносецсем хушшинче ăмăртса ĕçлес йăла çук. Çавăнпа ĕнтĕ хаçат-журнал сарас ĕç те начар. Уйрăмăнах Асанкассинче, Çĕнĕ Чурăшра, Выçлире тата Чурачăкра хаçат-журнал начар сăралать. Асанкассинчи пиçмоносец Тимофейĕв çырусене усса вулать, хаçатсене вăхăтра салатса памасть. Кĕлĕмкассинчи пиçмоносец Василйĕв колхозниксене час-часах хаçатсăр лартать.

В.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн

Çĕрпӳри йалхуçалăх техникумĕ çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитрĕ. Техникум çуртне, обшчежитисене йусанă. Вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене çителĕклĕ илсе хунă. Библиотекăра 22 пин кĕнеке шутланать. Унта Маркс, Енгельс, Ленин, Сталин ĕçĕсем тата йалхуçалăх наукин кĕнекисем нумай. Техникумăн хими, физикă кабинечĕсем пур.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пĕрремĕш класа 80 ача илмеле. Зайавлени 250 ача панă, вĕсенчен „отличьо" паллăсемпе вĕренсе тухса мухтав грамăти илнисем 9 ача.

Кăçал йалхуçалăх техникумĕ çĕнĕ вĕренӳ çулне ытти çулхисенчен лайăхрах пуçлать.

Вик. Дмитрийĕв.

Ишекри (Ишлей р.) вăтам шкул вĕренӳ çулне хатĕр. Шкула йусаса пĕтерне. Вĕренекенсем пуранакан обшчежитине питĕ аван йĕркеленĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленессипе А. Ильухин йулташ тăрăшса ĕçлерĕ.

И Макарăв.

Палтайри вăтам шкул (Йетĕрне районĕ) ачасене çулахи каникула йарсанах çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăнчĕ. Чи малтанах, çĕмрĕк партăсене йусарĕç тата çĕнĕ партăсем тутарчĕç. Çавнашкалах класри доскасене йусаса сăрласа лартрĕç. Шкул дирекцийĕ ачасем валли 7 пин тетрать, дневниксем, ручкăсем, перосем, кăранташсем тата илемлĕ литература туйанса хучĕ.

И. Чиндыков.

ВĂРМАР. Тупахри туллимар вăтам шкул 1938—39 вĕренӳ çулне халĕ те хатĕрленме тытăнман. Шкулăн виçĕ клас, 122 партă тата 3 доска çитмест. 212 кубла метр вутă кӳмеле пулсан, августăн 16-мĕшне 90 кубла метр çеç хатĕрлесе хунă. Çавăн пекех учебниксемпе тетрадьсем хатĕрлес пирки те ĕç питĕ йапăх тăрать. Пĕтĕмĕшпе илсен, шкул вĕренӳ çулне хатĕр мар-ха.

Д. Александрăв.

ПĂРАЧКАВ. Долгоборьнари саватри пуçламĕш шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитмен. Пайанхи куна шкул (заведуйушчийĕ А. Петров) пĕррремĕш хут шкула çӳрекенсене учота илсе тухман. Партăсем йусавлă мар. Ваннă кантăксене те лартман.

П. Михайлăв.

Çилос хываççĕ

ТĂВАЙ. Лачкассинчи „Çăлтăр", Çĕçĕ Тăрмашри „Мартăн 8-мĕшĕ" колхозсем 80 тоннă çилос хывса хăварчĕç. Районри ытти колхозсем ку тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ-ха. Районĕпе пурĕ 3 600 тоннă çилос хывса хăвармала пулсан, 150 тоннă çеç хывнă.

В. Ийин.

ÇУРАН ÇАР

Çуран çар вăл ... çарăн тĕп вăйĕ пулса тăрать. К. Й. Ворошилов йулташ Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă йатпа тунă докладĕнче çапла каланă: „Пирĕн танксем, авиаци, çапăçура ытти çар автăрĕсем те темĕн чухлĕ пулсан та, çуран çар çав-çавах çарăн тĕп вăйĕ пулса йулать. Çуран çарсăр танксем те, авиаци те, утлă çар та çапăçура вăрçă задачисене пĕтĕмпех татса пама пултараймаççĕ."

[illegible]

... пăхмасăр вăл вăйсăр туса ирттерчĕ".

Россипе Японин хушшинче 1904 çулта пулса иртнĕ вăрçăра çĕнĕ хĕçпăшал—пулемет сиксе тухрĕ. Анчах унăн хисепĕ нумай мар пулнипе çуран çар тактикине вăл улăштараймарĕ.

Çуран çар 1914—1918 çулсенчи тĕнче вăрçине те çакнашкал йĕркепе пырса кĕчĕ, тата вăл çапăçура çав-çавах тĕп вăй пулса пычĕ.

Тĕнче вăрçине экономика тата çар тĕлĕшĕнчен ытларах хăватлă государствăсем пурте хутшăнчĕç. [illegible]

Маневрлă çапăçусенче пулеметсем вăйĕ пысăк пулни палăрчĕ, [illegible]

массăллă çарсем пысăк лаптăк çинче вырнаçса тăма пуçласан, çуран çар çапăçăвĕн характерĕ те нумай улшăнчĕ. Маларах пулса иртнĕ пур вăрçăсенче те татăклă акт вăл—штыксемпе çапăçни пулса пынăччĕ. Тĕнче вăрçи вăхăтĕнче çапăçу вут вăйĕ çине куçрĕ.

Нимĕçсем кашни 75—100 метр тан пĕр ретпе тăсăлса хумăн-хумăн атакă туса пынă. Çавăн пек атакăласан оборонăра тăракансем тапăнакансене пурне те вĕлерсе пĕтерме ĕлкĕреймеççĕ тесе шутланă. Çакнашкал атакă вăхăтĕнче çуран çар питĕ пĕтнĕ. [illegible] Çапах та тĕнче вăрçине хутшăнакансем, урăх лайăхрах май нимĕн те шутласа кăлараймасăр, хăйсен çарĕсене хумăн-хумăн тапăнассине вăйлатнă.

Тата, Ф. Енгельс каланă пек, салтак офицертен ăсларах пулса тухнă. Халĭхинче вăл группăпа атакă тăвассине пуçласа янă. Кун пек атакă тунă чух çуран çар фронт тăрăх чăсăлакан ретсемпе мар, уйрăм группăсемпе, 10—15 шар боец, автоматлă хĕçпăшалпа тапăнса пыраççĕ. Çапла тусан кашни уйрăм группă тăшман пульăсенчен пытанма тата тăшман çине пытанса пеме çĕр çинчи меслсемпе май килнĕ таран лайăхрах усă курать. Çак меслет çăмăл пулемет тухсан питĕ хăвăрт сарăлчĕ. Кашни стрелковăй отделени винтовкăсемсĕр пуçне тата çăмăл пулеметпа хĕçпăшалланчĕ.

Артиллери хăватлăн пулăшсан та тата хăйне пĕрле илсе çӳрекен орудисем пур пулсан та, çирĕп [illegible]

[illegible] 1917 çулти ноябрĕн 20-мĕшĕнче çутăлас умĕн Камбре районĕнче (Франци) [illegible] танк чăмса тухнă та, нимĕçсен çуран çарĕ çине пулеметсемпе тата пушкăсемпе персе сиксе ӳкнĕ. Хурçăран тунă тĕлĕнмеле йăпăласене хирĕç кĕрешме пулеметсем вăйсăр пулнă, пĕр артиллери çеç вĕсемпе хире хирĕç тăма пултарнă. Англин танксемпе витĕнсе пынă çуран çарĕ нимĕçсене çĕмĕрсе тăкнă. Çакнашкал йăпăласем 1918 çулти июлĕн 18-мĕшĕнче Суассон çывăхĕнче, 1918 çулхи августăн 8-мĕшĕнче Амьен çывăхĕнче тата нумай ытти çапăçусенче те пулнă.

Çуран çарăн тапăнас ĕçри хăватлă союзникĕ тата оборонăри хăрушă тăшманĕ тухса тăнă.

Тĕнче вăрçи танксемпе кĕрешмелли майсем çинчен тата вĕсемпе пĕрле мĕнле тапăнса пымалли çинчен татăклă решени параймарĕ. Çак ыйтусем вăрçă хыççăнхи вăхăтра, уйрăмăнах Испанири вăрçă опычĕ çинче пайанхи кун та малалла тăсăлса пыраççĕ.

Тĕнче вăрçи хыççăн нумайĕш çар специалисĕсем çуран çар кучухнехи çапăçура мĕнле вырăн йышăнса тăнине ытлашши чакарса хакларĕç. Англири Фуллер генерал çуран çара уйрăмăнах хытă критиклерĕ. Вăл çуран çара иккĕмĕш вырăна хăварчĕ, механизацилĕ тата моторлă вăйсене малти вырăна кăларса тăратрĕ.

Фуллер критикинчен вăл массăллă çарсенчен, хăйсемпе пĕрле революцилĕ шухăш илсе пыракан çарсенчен хăрани курăнать. Фуллер хăйĕн вырăнне империализмлă государствăсен çарĕсен опычĕсене курса тăрать. Империализм, паллă, хăйĕн çуран çарне чаплă ĕçсем тума хавхалантараймарĕ. Вăл ăна пысăк çине хăваласа кĕртме çеç пĕлчĕ.

Хĕрлĕ Çарăн геройлă çуран çарĕ çинчен, вăл паттăрлăх, тусĕмлĕх тата çапăçу условийĕсемпе усă курма пултарни образецĕсене кăтартни çинчен Фуллер пĕлмест. Вăл кучухнехи çуран çар танксенчен сыхланма пултарнине шута илесшĕн мар. Çуран çар халь танксене хирĕç кĕрешекен артиллери тата инженерлă чăрмавсем тумалли май тупрĕ.

Кучухнехи çуран çарăн тапăнмалли тата оборонăра тăмалли хатĕрсем пурте пур. Унăн автоматпа перекен хĕçпăшалсем, пăшалпа персе йăмалли тата алăпа ывăтмалли гранатăсем, пĕчĕк калиберлă артиллери, минометсем питĕ нумай. Вăл чи нумай массăллă çар организацийĕ пулса тăрать.

Çуран çарăн вăйĕ—хăйĕн хĕçпăшалĕсемпе усă курма пĕлнинче тата ытти çарсен вăйĕпе килĕштерсе çапăçнинче тăрать.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн 1936 çулти полевой уставĕ ун çинчен çапла калать: „Çуран çар, артиллерипе тата танксемпе тачă çыхăнса тăрса, тапăнса пынă чух татăклăн кĕрешсе тата оборонăра хăйĕн вăрçăллă положенине сыхласа хăварса çапăçăва пĕтĕмпех татса парать. Çавăнпа та çуран çарпа пĕрле çапăçакан ытти çар вăйĕсем хăйсен задачисене çуран çар интересĕшĕн тăваççĕ, ун валли тапăннă чух малала куçма, оборонăра чух çирĕп тăма май туса параççĕ".

Испанире тата Китайра пулса иртекен вăрçăсем çуран çар кучухнехи çапăçура мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен çапла калани пĕтĕмпех çирĕплетсе пыраççĕ. Акă икĕ пример: 1936 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнче Испании республикăллă çар командованийĕ пăлхавçăсем çине Сесенья, Ескивас, Илйескас (Мадридран кăнтăр йĕнчи пункчĕсем) йĕнеле пырса çапма йышăннă. Çак операци валли 8—9 пин çынлă çуран çар (Уррибарипе Бурилйо колоннисене тата Листер бригадине) тата танксен ротине уйăрнă. Çапăçу 11 сехетре пуçланнă. Танксем малтан кайнă. Вĕсем Сесеньйана çĕмĕрсе кĕнĕ, пăлхавçăсен пĕр батальон çуран çарне пĕтерсе тăкнă та малала кайнă. Анчах республиканецсен çуран çарĕ кайа йулнă. Çав вăхăтра пăлхавçăсем икĕ батальона йăхăн пулăшу илнĕ те, часах хăйсене йĕркене кĕртнĕ. Республиканецсен çуран çарĕ Сесеньйана çитсен, вĕсене хирĕç пăлхавçăсем пулеметсемпе тата винтовкăсемпе вăйлăн персе хирĕç тăнă. Çапла ĕнтĕ, республиканецсен танкĕсем Сесеньйана çĕмĕрсе кĕрсе пăлхавçăсен пĕр батальон çуран çарне пĕтерсе тăкнă пулин те, хăйсен çуран çарĕсĕр вĕсем Сесеньйана хăйсен аллинче тытса тăма пултарайман.

Харама йуханшывĕ çывăхĕнче 1937 çулхи февральте Пингаррон йатлă сӳллĕ вырăншăн республиканецсемпе пăлхавçăсем хушшинче вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Республиканецсем çав сӳллĕ вырăн çине артиллерипе вăйлă персе тăнă, танксем йанă, унтан çуран çар кайнă. Анчах пăлхавçăсен пулемечĕсем питĕ лайăх пытаннă пулнă, вĕсене артиллери те, танксем те путараймин. Республиканецсен çуран çарĕ пырса çитсен, вĕсен çине пулеметсемпе вăйлă персе тăнă. Вара, танксем çав сӳллĕ вырăн çинче темиçе хут та пулнă пулин те, çуран çар ăна йышăнса илеймен. Испанипе Китайри ытти фронтсенче те çакнашкал йăпăласем нумай пулнă.

Нимĕн иккĕленмели те çук, революцилĕ халăхăн çуран çарĕ, наукăпа техникăн пур çитĕнĕвĕсемпе те лайăх усă курса, чи лайăх тактика тума пултарĕ тата фашизм çарне татăклăнах çĕмĕрсе тăкĕ.

Комбриг П. Смирнов.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

„Чăваш Коммуни" хаçат [illegible] уйăха 2 т. 50 п., 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подпискăна çыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.
Уполномоченнăй Чувашглавлита № 447. Гор. Чебоксары, Типографии № 1 Чувашполиграф треста, Заказ № 863.